Пирĕн вулакансем çыраççĕ

Манăн чун ыратăвĕ

Паянхи ял пурнăçне пăхатăн та, чун ыратать. Çырас темен çĕртенех алă ручка патне туртăнать. Акă каллех хамăн чун ыратăвне çырас терĕм.

Малтанхи пурнăçра пулсан хаçатсенче çырсан хаçат урлă тĕрлĕрен ыйту çине ответлетчĕç, кирлĕ пек мерăсем йышăнатчĕç. Халĕ вара кун пекки çук. Шутлатăн та, мĕн тума çыратăп-ха, çапах ман чун ыратăвĕ никама та хумхантармасть вĕт-ха. Хумхантарать пулсан вара мĕншĕн-ха мана шухăшлаттаракан ыйтусем çине нимĕнле хурав та çук.

Тĕслĕхрен, эпĕ вăрмансенчи паянхи хуçасăрлăх пирки çырнăччĕ. Анчах паянхи кун та нимĕнле хурав та çук. Ирĕксĕрех шутлатăн: пирĕн районта вăрман енĕпе ĕçлеккен çук. Ыйтусем çине нимĕнле хурав та çук.

Депутат пулнă май халăх ыйтакан ыйтусем çине запроссем тума лекет, анчах та кăларса тăратнă ыйтусене татса парасси пысăк йывăрлăхра вара.

Иртнĕ çул Республика кунне пирĕн районта ирттерчĕç. Район центрĕнче мĕн кăна тумарĕç пулĕ. Пирĕн еннелле те çулсем туса пачĕç темелле. Москакассинчен Мăн Сĕнтĕре, Катькассинчен Мăн Сĕнтĕре, Мăн Сĕнтĕре Катькасси витĕр килекен çула та.

Анчах та çулсем тунă май автобуссем кĕтсе тăракансем валли павильонсем лартассипе тимлемерĕç. Эпĕ темиçе хут та ку ыйтăва пуçарнă пулин те, хальлĕхе павильонсем Кĕрекаç ялĕ патĕнче те, Ильинкăна пăрăннă çĕрте те, Апчар ялĕ тĕлĕнче те, икĕ Тутаркас ялĕ патĕнче те çук.

Мăн Сĕнтĕрте те пысăк павильона пăсса ниме тăман будка лартса пачĕç. Çанталăк лайăх чухне юрать-ха. Çумăр е çил-тăман пулсан вара автобус кĕтекенсен ăçта тăмалла? Район центрне каякан çул çинче вара икĕ енче те хитре павильонсем лараççĕ вĕт-ха.

Е тата Мăн Сĕнтĕр урамĕсене тирпей-илем кĕртме пачах та май пулмарĕ-ши район центрне капăрлатнипе пĕрле?

Ленин урамĕпе кам кăна иртсе çÿремест пулĕ. Апла пулин те çулăн икĕ енĕпе те пылчăк кăна. Типĕ çанталăкра вара çил пулсан урама та ан тух. «Новая» урам пирки калас пулсан татах хăрушăрах. Ку урамра Мăн Сĕнтĕрсен ытларах пайĕ пурăнать пулсан та, кунта нимĕнле тротуар та çук.

Мĕн Сĕнтĕрти пушар чаçĕ пирки нумай калаçрăмăр. Паянхи куна çак ыйтăва май пур таран татса панăшăн манăн район администрацине тав сăмахĕ калас килет.

Сĕт ыйтăвĕ пирки манăн район хаçатне икĕ хутчен те çырма тÿр килнĕччĕ. Анчах та ял çыннине хĕрхенекенсен шучĕ кунран-кун чакса кăна пырать иккен.

Сĕт хакĕ пирки ял çыннине никам та ăнлантарса паракан çук. Мĕнле-ха вăл 4 процента яхăн çуллă сĕте 3 тенкĕ те 80 пуспа пуçтарса 28–30 тенкĕпе сутма пулать? Сутакан сĕтĕн çăвĕ те 2 – 2,5 процент чухлĕ кăна пулсан та, хакĕ вара 7–8 хут хаклăрах. Çакă вăл ĕне усракантан кулни мар-и?

Республикăра çÿлти вырăнсене йышăнакансем кам кăна çук пулĕ. Вĕсен вара ял çыннисен интересĕсене хÿтĕлес тесе ĕçлес кăмăлĕсем çукрах пулас. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене те ял çыннисен пурнăçĕ ытлашши хумхантармасть пулмалла. Вĕсене ял çынни суйлав вăхăтĕнче кăна кирлĕ тесе шутлатăп. Çакă чăннипех çапла пулнине тепĕр тĕслĕх те çирĕплетсе парать. Тĕслĕхрен, тĕрлĕрен наркăмăшлă алкоголь шĕвекĕсене сутассине чакарас тесе те саккуна кирлĕ пек улшăнусем кĕртес ĕçе миçе çул ĕнтĕ тумаççĕ. Çавна пула вара мĕн чухлĕ çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать е инвалидсен шучĕ ÿсет.

Тата ку çынсене сыватма бюджетран сахал мар укçатенкĕ тăкакланать. Кунсăр пуçне эрех ăшне путакансен шучĕ те ÿссе кăна пырать вĕт-ха. Мĕншĕн-ха çак трагедипе пĕрле кĕрешмелле мар?

Чăваш Ен Президенчĕ кăçалхи çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе палăртнăччĕ. Малтанах çапла клатчĕç: «Кăçал пĕр гектар та сухаласа акмасăр çĕр юлмасть». Эпĕ пурăнакан ял тавра вара иртнĕ çул акнă уйсем те кăçал çум курăкĕ айĕнче кăна. Малтанах «Сундырский» совхозĕ, каярах «Рассвет» агрофирма терĕç. Кăçал вара пĕтĕмпех пĕтерме пултарчĕç иккен. Анчах кам айăплă-ха çакăншăн? Ял çынни кăна-и?

Мĕншĕн-ха промышленность, ял хуçалăх предприятийĕсене туянакан предпринимательсем, предприятисене тĕппипех пĕтереççĕ пулин те, нимĕнле ответ та тытмаççĕ. Сутса пĕтереççĕ те тухса каяççĕ.

«Хлебороб» хуçалăха Кот хушаматлă хуçа илнĕ. Илнĕ пулсан мĕншĕн-ха йĕрке тумасть? Мĕншĕн тыр-пул, пахча çимĕç, çĕр улми ÿстермест, аш-какай, сĕт туса илмест? Çак ĕçре камăн-ха йĕрке тумалла? Малалла ял çыннин мĕнле пурăнмаллаха?

П. ВОРОБЬЕВ,
депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.

Герой урамĕнче асфальт çул пуласса кĕтетпĕр

Чи малтан манăн ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров июнь уйăхĕнче ирттернĕ пресс-конференцире палăртнă шухăша аса илтерес килет. Сăмах ял урамĕсене асфальт сарасси пирки пычĕ. Ку енĕпе кăçал 300 миллион тенкĕ уйăраççĕ, терĕ президент. Çитес çул 1 миллиард тенкĕ тăкаклама палăртнă. Ку укçана тивĕçес тесен вырăнти влаç органĕсен уйрăмах пуçаруллă пулмалла. Вĕсен вăхăтра проектсене хатĕрлесе памалла. Ял урамĕсенче асфальт пуласси паян ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен килет.

Çапла вара ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен президент хушнине пурнăçлас тесен чупса ĕçлеме тивет. Вăл укçитенкине парать-çке.

Халĕ хамăн тăван Çурлатри ялĕ патне тавраннас килет. Вун тăххăрмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче ялта 3 кил пулнă пулсан, 1858 çулхи перепиçпе 27 кил шутланнă. Пÿртсене юхан шыв хĕррипе çырантан 30 – 40 метра лартнă. Халăх хушшинче урамне Карикас тесе каланă. Иванпа Агафи Воробьевсем пĕрлешсе çак урамра кил-çурт çавăрнă. Пурăна киле ачасем çуралма пуçлаççĕ. 1915 çулта Элекçи, 1918 çулта Фадей, 1921 çулта Ваçли кун çути кураççĕ.

Вăрçă пуçланиччен çак урамра 42 кил хуçалăхĕ пулнă.

1941 çулта вăрçă тухсан Иван Ивановичăн виçĕ ывăлĕ те Тăван çĕршыва хÿтĕлеме тухса каяççĕ. Фадейпа Василий çак çулах декабрь уйăхĕнче хыпарсăр çухалаççĕ.

Алексей Иванович хаяр вăрçăн тĕрлĕ фронтĕсенче тăшманпа паттăррăн çапăçать. 1945 çулхи апрель уйăхĕнче Берлин хулишĕн пынă çапăçусенче минерсен взвочĕн командирĕ А.И. Воробьев старшина хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Геройĕ ятне тивĕçет.

Тăван яла таврăнсан ăна Буденнăй ячĕпе хисепленекен колхоз ĕçченĕсем председатель пулма суйлаççĕ. Вăл унта 1946-1951 çулсенче ĕçлет. 1951 çулта колхозсене пĕрлештерсен, председатель пулма Е.А. Андреева суйланă, унăн çумĕ пулма Алексей Ивановича çирĕплетнĕ.

1952 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн мухтавлă ентешĕн пурнăçĕ сарăмсăр татăлать. Каярахпа Карикас урамĕнче пурăнакансем урама Совет Союзĕн Геройĕ А.И. Воробьев **(сăн ÿкерчĕкре)** ятне парас тесе йышăнаççĕ. Паллах, çак урамра асфальт çул пулмаллах. Президент пирĕн пирки каланăнах туйăнчĕ.

Ял халăхĕ Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин Совет Союзĕн Геройĕн урамĕнче асфальт çул туса паратех тесе шанать тата кĕтет.

Турă пулăштăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçа кĕтĕр!

В. КРЮЧКОВ.
Çурлатри ялĕ.

Турай тăрăхĕнчисен юратнă уявĕ

Турай ял тăрăхĕ çут çанталăк илемĕпе, таса та уçă сывлăшпа, пуян историпе, авалтан тымарланса килекен йăла-йĕркепе, ĕçчен те кăмăллă, тараватлă та пултаруллă çынсемпе палăрса тăрать. Çак кунсенче Турай ял тăрăхĕ мĕн авалтан йăлана кĕнĕ уява, Питрав кунне паллă турĕ. Чĕннĕ хăнасенчен вара депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Муркаш райпо канашĕн председателĕ Б.В. Андреев, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертÿçи В.С. Андреев, «ДААН» ертÿçи А.Ф. Степанов пулчĕç.

Уяв программи пуян пулчĕ. Вĕсене курма 11 ялти çынсем кăна мар, ытти регионсенчен хăнана килнисем те пухăнчĕç. Вĕсем Чăваш Ен илемĕпе киленме пултарчĕç. Питрав мероприятине вара Чăваш Республикинчи Çĕр ĕçченĕсен, Раççейри Çамрăксен çулталăкĕсене халалласа йĕркеленĕ.

Уява ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.В. Павлов уçрĕ. «Пурнăç илемĕ – малашлăх тĕллевĕ» ,– терĕ вăл. Хăйĕн сăмахĕнче Муркаш лицейне медальсемпе пĕтернĕ çамрăксене парнесем парса ăшă сăмахсем каласа малалла вĕренме кĕрсе специальноç илсе тăван кĕтесе таврăнма чĕнчĕ.

Ырă ĕçĕн çимĕçĕ те ырă теççĕ. Ĕç вăл – пурнăç тыткăчи. Вăлах çынна çĕклет, ят-сум хушать, киревсĕр йăлапа çыхланасран сыхлать, çемьене телей кÿрет.

Çак сăмахсене тĕпе хурса ĕçлекенсем йышлă пирĕн тăрăхра. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ уйрăмах хуçалăх ертÿçисемпе канашласа Анаткассинче пурăнакан А.Ю. Архипова механизатора, Г.Н. Иванова ĕне сăвакана, Г.Н. Яковлева сысна пăхакана, Н.А. Гавриловапа В.Е. Николаева уйхир ĕçченĕсене парнесем парса чыс турĕ.

«Çÿпçипе хупăлчи» теççĕ пĕр пек çынсене, упăшкипе арăмне. 50 çул пĕр-пĕрне килĕштерсе, ăнланса пурăнаççĕ пирĕн тăрăхра Пановсем (Николай Федоровичпа Викторина Кирилловна), Клементьевсем (Валентина Николаевнапа Николай Андреевич), Сильдиковсем (Валентина Васильевнапа Александр Николаевич). Вĕсем валли те ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ăшă сăмахсем тупса асăнмалăх парнесем парса чысларĕ. Вĕсене Тăван çĕршыва юрăхлă ачасем çуратса ÿстернĕшĕн тав сăмахĕ каларĕ.

Юрă-кĕвĕпе, парнесемпе пуян пулчĕ уяв. Турай ял тăрăхĕ хăйне евĕр халăх пултарулăхĕпе палăрса тăрать. Уява савăнăçлăрах ирттерме Турай ял тăрăхĕнчи культура ĕçченĕсенчен йĕркеленĕ агитбригада ушкăнĕ хавхалантарчĕ. Кунсăр пуçне Уйкасра çуралса ÿснĕ, халĕ Шупашкарта ĕçлесе пурăнакан Иосиф Александров вара хăйĕн ушкăнĕпе савăнтарчĕ.

Ялсем хушшинче йĕркеленĕ спорт спартакиади те интереслĕ иртрĕ. Командăсем Анаткасси, Уйкас, Турай ялĕсенчен пулчĕç. Ăмăртусен программи интереслĕ пулчĕ: хăвăрт чупасси, туннель витĕр тухасси, çĕлен пек каясси.

Командăсем хушшинче Анаткасси ялĕнчи команда пултарулăхĕпе те, ăсталăхĕпе те палăрса мала тухма пултарчĕ. Вĕсене Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертÿçи В.С. Андреев ăшшăн саламларĕ. Малашне те спорт ăмăртăвĕсене анлăн ирттерме чĕнсе каларĕ.

Пур командăсем те, куракансем те кăмăллă пулчĕç. Питрав уявĕ асăнмалăх юлчĕ.

Г. АНДРЕЕВА.

Пурăнать ялта ветеран

Калистрат Николаевич Охаркин июлĕн 8-мĕшĕнче 80 çул тултарчĕ. Ачалăхĕ унăн вăл вăхăтри ачасен пекех йывăр пулнă, хаяр вăрçă çулĕсене лекнĕ. Ашшĕне вăрçа илсе кайнă, амăшĕ вара 5 ачапа тăрса юлнă. Нумаях та вăхăт иртмен, Мефодий пиччĕшĕн те вăрçа кайма ят тухнă – кайнă та таврăнайман. Калистрат вара аппăшĕпе, амăшĕпе пĕрле колхозра уй-хир бригадинче вăй хунă, кайранрах сурăх ферминче ĕçлеме пуçланă. Нăйкăшма вăхăт пулман. Анчах ашшĕ вăрçăра пуç хуни çемьене çапсах хуçать. Йывăрлăха пурпĕр тÿсмелле, алла усмалла мар. Пурнăç малаллах шăвать. Çамрăка сурăх, чăх-чĕп фермисен заведующийĕ пулма шанса панă. Çĕмĕрле вăрманне те ĕçлеме янă ăна.

Вăрçă чарăнать, Калистратăн вара салтака кайма вăхăт çитет. Чита облаçĕнче пограничник пулнă вăл. Совет çарĕнчен тĕрĕс-тĕкел таврăнса çемье çавăрать. Мăшăрĕпе ултă ача çуратса ÿстереççĕ, анчах та икĕ ачи вăхăтсăр çĕре кĕреççĕ. Ку инкеке те тÿссе ирттереççĕ ашшĕпе амăшĕ...

Пĕр вăхăт Калистрат Николаевич Тойкилтĕ шкулĕнче завхоз пулса та ĕçлет. Каярахпа вара мăшăрĕпе пĕрле Саратов облаçне ĕçлеме тухса каяççĕ. Унта та колхозра вăй хунă. Вăхăт иртсен юратнă вырăнах таврăннă.

Колхоз ĕçĕнчен нихăçан та пăрăнман вăл, арманта та ĕçленĕ. Пенсие тухсан та çак ĕçе тÿрех пăрахман. Ачисене те пулăшнă.

Вăрçă çулĕсенче те, мирлĕ вăхăтра та тăрăшуллă пулнăшăн унăн ĕçне пысăка хурса хакланă. Ĕç ветеранĕ вăл. Аслă Çĕнтерÿ ячĕпе кăларнă юбилей медалĕсене те тивĕçнĕ хиселлĕ ватă. Çакăн пек ĕçчен ветерансенчен тĕслĕх илмелле те пирĕн – çамрăксен.

М. НИКОЛАЕВА,
Тойкилтĕ библиотекин ертÿçи.

Пурнăç интереслĕ те пуян

«Рябинушка» ача сачĕ питĕ илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Йĕри-тавра хĕп-хĕрлĕ пилешсем, хурăнсем ÿсеççĕ. Çак йывăçсем садике илем кÿреççĕ. Çавăн пекех йĕри-тавра симĕс курăк ешерет, тем тĕрлĕ чечексем хăйсен ырă шăршипе чунчĕрене тыткăна илеççĕ. Çак илемлĕ садикре ырă чунлă, кăмăллă воспитательсем ĕçлеççĕ.

Вĕсенчен пĕри – Елена Вячеславовна Илугина. Вăл педагогика училищине тата Чăваш патшалăх университечĕн филологи факультетне вĕренсе пĕтернĕ. Юнкă садикĕнче ĕçлеме пуçланăранпа 3 çул çитрĕ. Хăйĕн ырă кăмăлĕпе, ĕçченлĕхĕпе, пултарулăхĕпе, çепĕç чĕлхипе ачасене тыткăна илчĕ.

Пирĕн ачасем Елена Вячеславовнана чăнахах та юратаççĕ. Чун-чĕререн. Ирхине вăл пирĕн ачасене кăмăллăн кĕтсе илет, ушкăнра яланах тирпейлĕ, илемлĕ. Пирĕн ачасем садике савăнсах юлаççĕ. Занятисене те питĕ ăста, чунне парса ирттерет Елена Вячеславовна. Утренниксенче вара тĕрлĕрен рольсене питĕ ăста вылять: Баба-Яга та, мулкач та, кашкăр та, çавăн пекех патша, асаттепе асанне ролĕсем те лайăх сăнарланса тухаççĕ.

Кăçал пирĕн ачасем садикпе сыв пуллашрĕç. Эпир хамăрăн юратнă воспитательницăна ырă сывлăх, телей сунатпăр çак пурнăçра. Яланах ăшă кăмăллă, илемлĕ, çепĕç чунлă пулăр, Елена Вячеславовна!

Сире ырă сунса аслă ушкăнри ачасен ашшĕсемпе амăшĕсен ячĕпе Алина МАКСИМОВА,
Марина БАРХАТКИНА.